# Паваркасси библиотекин историйĕ

Паваркассинчи ял библиотеки малтан Елюккасси ялёнче уҫăлнă. Ăна 1951 ҫулта Яковлев Андрей Яковлевич килёнче йёркеленё. Ку кил вăл вăхăтра пушă ларнă. Унăн хуҫисем Канашра пурăннă. Йывăҫ суртра пёр кăмака, кёнеке хумалли ҫÿлёксем ăсталаса тунă. Библиотека валли кёнекесем Шупашкартан илсе килнё. Вăл вăхăтра Елюккасси ялё Çурачăк районне кёнё. Районти культура пайён пуҫлăхё Сергеев Николай Сергеевич Елюккасси ялёнче ҫуралса ÿснёскер пулнă. Ҫавăнпа та ёнтё, вăл тăрăшнипе, библиотекăна Елюккасси ялёнче уҫнă. Пуҫласа вулав ҫуртёнче 1800 экземпляр кёнеке шутланса тăнă. Библиотекарь пулма 21 ҫулхи комсомолкăна Иванова Ольга Ивановнăна ҫирёплетнё.



Ольга Ивановна 1930 ҫулта Елюккасси ялёнче хресчен ҫемйинче ҫуралнă. 1941 ҫулта унăн ашшё Аслă Отечественнăй вăрҫара пуҫне хунă. 10 ҫулхи хёрача тăлăха тăрса юлнă. Тем пек йывăр пулсан та

Вăтам шкул пĕтерсен Вăрнарти ялхуçалăх техникумне вĕренме кĕрет. 1948 çулта, унтан вĕренсе тухсан, «Красная Поварния» колхозра агроном пулса ĕçет. 1951 çулта, унăн пултаруллăхне курă, Ольга Ивановнăна библиотека ĕçне шанса параççĕ. Уйрăм çын килĕнче 2 çул хушши ĕçленĕ хыççăн, 1953 çулта библиотека колхоз клубне куçать. Клубра питĕ сивĕ пулнă, мĕншĕн тесен медпунктпа библиотекăна пĕрле пĕр кăмака çеç ăшăтнă. Çапах та ял халăхĕ вулав çуртне тăтăшах çÿренĕ, мĕншĕн тесен радио, телевизор пулман. Кĕске вăхăтрах пысăках мар пÿлĕмре кĕнеке çÿлĕкĕсем, каталог ещĕкĕ, сĕтел-пукансем вырнаçтараççĕ. Библиотекăна плакатсемпе выставкăсем, стендсем илем кÿрсе тăраççĕ. Вулакансен йышĕ те кунсеренех ÿссе пырать.

Библиотека 4 яла кĕнеке парса тăнă. Вĕсен шутне Катзакасси, Çĕнĕ Ямаш, Паваркасси, Елюккасси ялĕсем кĕнĕ. Клуб заведующийĕ те Ольга Ивановна хăех пулнă, çавăнпа та тĕрлĕ лекцисем, доклaдсем, конференцисем, спектакльсем ирттернĕ

Ольга Ивановна вăл вăхăтри йывăр условисене пăхмасăрах чунне парса ĕçленĕ. Ăна унăн ĕçне кура Хисеп грамотисемпе наградăланă.

1954 çулхи октябрь уйăхĕнче, библиотекăна ĕçлеме Çĕрпӳри библиотека техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Тимофеева Клавдия Ивановнăна ярасçĕ. Вăл 1934 çулта Елюккасси



ялĕнче çуралнă. Вăтам шкул пĕтерсен библиотека техникумне вĕренме кĕнĕ.

1967 çулта колхоз Елюккассинче çĕнĕ клуб тума пуçлать, 1970-мĕш çулсенче хута ярать те, унта библиотека валли пӳлĕм уйăрса парасçĕ.

Клавдия Ивановна питĕ тăрăшса ĕçленĕ. Çавăн пекех ферТĕрлĕ мероприятисем ирттернĕ. Çавăн пекех фермăсенче, мехпарксенче, йĕтем çинче ĕçлекенсем хушшинче лекцисем, докладсем вуланă.

Клавдия Ивановнăна нумай-нумай Хисеп грамотисемпе

чысланă. 1971 çулта Клавдия Ивановна ял Советне
секретарь пулса ĕçлеме куçать. Ун вырăнне Семенова
Антонина Степановна ĕçлеме тытăнать. Вăл 1936 çулта Па-



варкасси ялĕнче хресчен çемйинче çу-
ралнă. Ялти тулли мар вăтам шкула вĕрен-
се пĕтерне хыççăн тăван колхозра ĕçле-
нĕ. 1970 çулта вăл Çĕрпÿри культурăпа çут
ĕç училищине вĕренме кĕнĕ. 1971 çулта ăна
Елюккасси библиотекине ĕçлеме ярассĕ.

1975 çулта библиотекăна Елюккассинчен
совхозăн тĕп усадьбине, Паваркассине, ку-
çараççĕ. Вăл икĕ хутлă клуб çуртĕнче вырнаçнă.

Библиотекăра çĕнĕ кĕнекесемпе паллаштаракан
стендсем, кĕнеке выставкисем йĕркеленĕ. Ача-пăча лите-
ратури, çитĕннисем валли кĕнеке йышĕ ÿссех пынă.
Вулакансен йышĕ 700 вулакантан иртнĕ. Тĕрлĕ-тĕрлĕ
... журнал сырăннă

Антонина Степановна библиотекăра чунне парса ĕçле-нĕ. Ăна Хисеп грамотисемпе чысланă. 1990 çулта Антонина Степановна вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

1990 çулхи август уйăхĕнче библиотекăра Сильвестрова Алина Фёдоровна ĕçлеме тытăнать. Алина 1971 çулта Паваркасси ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. 1978-1986 çулсенче Паваркассинчи сакăр çул вĕренмелли шкулта вĕреннĕ. 1990 çулта Вăрнарти совхоз техникумран вĕренсе тухса 4 уйăх бригадирта ĕçленĕ. Хыççăн библиотекăна ĕçлеме куçать. 1993-1995 çулсенче Чăваш Республикинчи культура училищинче хăй тĕллĕн вĕреннĕ.

1994 çулхи ноябрь уйăхĕнче клубра пушар тухнă. Çавăн чухне питĕ нумай кĕнеке, хаçат-журнал, ытти документсем юрăхсăра тухнă. Ун хыççăн библиотека ял совечĕ пулнă кивĕ çуртра куçать. Халĕ библиотекăра 500 ытла вулакан. Библиотекăна тĕрлĕ кĕнеке выставкисем, стендсем илем кÿреççĕ. Кунта ÿсекен чечексем куна илĕртеççĕ.

1998 çулхи июнь 19 мешĕнчен библиотекăра Николаева Альбина Васильевна ĕçлеме пуçлать. Альбина Васильевна 1964 çулта Паваркаси ялĕнче çуралнă. Вăл ытти çерте ĕçленĕ пулсан та, ăшра яланах пурнăçа кĕнекепе çыхăнтарас шухăш пулнă. Çапла вара вăл 1998-2000 çулсене Чăваш Республикинчи культура училищинче хай тĕллĕн вĕреннĕ. Библиотекăна чунтан парăннă çын, хăйĕн ĕçне юратса ĕçлет, çавăнпа та библиотекăра яланах вулакансем йышлă.

